ҪЕН КĔНЕКИ

№ 1

Проф. Костычев

# Тырра ... арпа пĕтесрен ... хламалла

(... засухами)

...ент. библіотека
Цивильскаго высшаго начальнаго училища
...
Отд. ........
№ систем. ........

Тимухха Хĕветĕрĕ куҫарнă.

РЕСПУПЛĔКРИ
ҪĂВАШ КĔНЕКИ КĂЛАРАКАН УЙРĂМ
ШУПАШКАР 1924

ХРЕСҪЕН КЁНЕКИ

№ 1

Проф. Костычев

# Тыррапулла уйарпа пĕтесрен йепле сыхламалла

(Борьба с засухами)

Тимухха Хĕветĕрĕ куçарнă.

РЕСПУПЛЁКРИ
ҪĂВАШ КЁНЕКИ КĂЛАРАКАН УЙРĂМ
ШУПАШКАР ▣ 1924

Областлит № 189. Печат. 3.000 экз.

г. Чебоксары Типография Чувашиздата.

## I. Хура тăпранăн хăшхăш хăваҫĕсем, хура тăпра пур вăхăтра та пĕр пек выртманни.

Тырă мĕншĕн пулманни ҫинҫен калаҫма тытăнсан, нумайĕшĕ тырă пулманни ҫумăр ҫуманран, ҫанталăк уйар тăнăран килет теҫҫĕ. Вăл ҫăнах та ҫапла пек туйăнаҫ. Ҫанталăк уйар тăрсан, нихăҫан та ҫумăр ҫумасан, тырă аван пуласса шанма ҫук вара. Анҫах епĕр ҫапла калани пĕтĕмпех тĕрĕс мар.

Тырă пулманни пуринҫен ытла тырă акакан анăран, тата ăна мĕлле ĕҫленинҫен килет. Ҫавăнна тырă пулă аван туса илес тесессĕн, пирĕн хамăр ҫĕр йеплине пĕлес пулаҫ, вара ăна уйар пулсан та, ҫумăр ҫумасан та тырăпулă аван ӳстерекен тума тăрăшас пулаҫ. Ăна ҫăнах та ҫавăн пек тума пулаҫ. Тырă наҫар пулни ҫанталăк уйар тăнăран анҫах килменнине пĕлтерме епĕ сире малтан акă мĕн каласа парам.

Ленин (Питĕр) кĕпĕрнинҫе пĕр вырăна ҫунă ҫумăрпа йура пĕрле пухса пырсан, вĕсен ҫӳллĕшĕ ҫулталăкра 10 вершука йахăн ҫитет; Воронĕш кĕпĕрнинҫе 13 вершука йахăн ҫитет. Ленин кĕпĕрнинҫе ҫумăр сахалтарах ҫăваҫ пулсан та, тырă нихăҫан та уйарпа аптăрамасҫ. Воронĕш кĕпĕрнинҫе ҫумăр нумайтарах ҫăваҫ пулсан та, тырă унта ҫас ҫасах уйарпа пĕтет. Мĕншĕн вăл апла? Мĕншĕн тесен ҫав икĕ кĕпĕрнере ҫĕр пĕр пек мар. Ҫапла ĕнтĕ тырăпулă уйартан аптăрани акнă ҫĕртен килни паллă.

Тата Воронĕш кĕпĕрнине, Ставроппăл кĕпĕрнине, Оренпурх кĕпĕрнинҫи Тройĕскă йатлă хулана

илер. Тройёскăра йурпа çумăр çăвакан кун çулталăкра 99 куна йахăн, çав кунсенҫе çĕр çине пĕр вырăна çунă шывăн çӳллĕшĕ 7 вершука йахăн: Воронĕш кĕпĕрнинҫе çумăрпа йур çăвакан кун 120 йахăн, çав кунсенҫе 13 вершук çӳллĕшĕ шыв пухăнаҭ. Ставроппăљ кĕпĕрнинҫе 123 куншыв çӳллĕшĕ 16 вершука йахăн. Çапла ĕнтĕ шыв Ставроппăљ кĕпĕрнинҫе Воронĕш кĕпĕрнинҫен ытларах ӳкет, Тройёскăринҫен икĕ хут нумайтарах ӳкет.

Çакна астуса шухăшласан, çав виçĕ вырăнти курăксем виçĕ тĕрлĕ ӳсмелле пек: пĕр çĕрте лайăхрах, тепĕр çĕрте наҫартарах пулмалла пек. Анҫах çав виçĕ çĕрте те курăксем пĕр пекех çитĕнеççĕ. Çуркунне курăксем пăтса тухаççĕ, ҫеҫеке лараççĕ, çуркунне иртеспе вăрă кăлараççĕ, çулла пулсан типсе кайаççĕ. кĕркуннепе каллех ҫĕрĕлеççĕ.

Мĕншĕн çакă виçĕ çĕрте те, çумăр пĕр пек çумасан та, курăксем пĕр пекех çитĕнеççĕ? Мĕншĕн тесен, çав виçĕ çĕр те пĕр пек çĕр. Çавăнти çĕрех тата сухаласа тырă аксан, тырă пит уйар пулсан та, аван пулаҭ. Сухаламан çĕрти курăксем пек уйарпа типсе каймасҭ. Йепле вăл пĕр уйрах, пĕр пек хура тăпраллă çĕртех пĕр пек çумăр çунипех курăксем типсе кайаççĕ, ана çинҫи тырă лайăхах çитĕнет? Мĕншĕн тесен, çĕр пĕр тĕслĕ мар: сухаласан çав çĕрех улăшăнаҭ, урăх тĕслĕ пулаҭ, уйартан хăрамасҭ. Çавăн пек çĕр уйар пулсан та, хăй нӳррине пĕтĕмпех пĕтермест, çавăнпа унта тырă та уйартан аптăрамасҭ.

Епĕ каланинҫен есĕр пĕлтĕр пулĕ ĕнтĕ: çĕр нӳрĕ тăни çумăр çуни çуманнинҫен анҫах мар, тата çĕртен хăйĕнҫен те килет: хăш çĕр хăй нӳрĕкне лайăх тытса усраҭ, хăшĕ кăшт уйар пулсанах типсе

кайаҫ. Хăш ҫӗрте ҫумăр сахал пулсан та, тырă нӳрӗксӗр аптăрамасҫ, унта тăпра хăй нӳрӗкне лайăх тытаҫ. Хăш ҫӗрте ҫумăр нумай ҫусан та, тырă типсе кайаҫ, унта тăпра хăй ашӗнҫи нӳрӗкне ҫарса тăраймасҫ.

Ҫавăнпа тырăпулă уйарпа ан аптăратăр тесен пирӗн тыра акакан ҫӗрте нӳрӗ тăратма тăрăшас пулаҫ. Ана йепле тумаллине пӗлме епӗ сире тăпра нӳрӗкне тытни тытманни мӗнте килнине каласа парам.

Епӗр пӗлетпӗр: шыв ҫӗре ҫăмăртан йе прӗлекен йуртан сăрăхса кӗрет. Тӗрлӗ тăпрана сăнасан, епӗр акă мӗн куратпăр: хăш тăпра витӗр шыв ҫасах анса кайаҫ, хăшин витӗр вăрахăнтарах анаҫ, тăпра шыва ҫас туртса илеймест. Шыва ҫас туртса илекен тăпра хăйăрлă, шултăра пӗрҫӗллӗ пулаҫ. Ҫавăн пек пӗрҫӗсем хушшинҫе аслă пушă вырăнсем йулаҫҫӗ. Ҫавсем тăрăх айалалла шыв ҫасах анса кайаҫ. Ҫавăн пек ҫӗр шултăра ала пек.

Шыва ҫасах туртса илеймен тăпра тусан пек вӗтӗ пӗрҫӗллӗ. Ҫав пӗрҫӗсем хушши питӗ хӗсӗк, ансăр, курмалла та мар. Вӗсем тăрăх шыв айалалла анса кайаймасҫ, вăрахăн анаҫ. Ҫакăн пек тăпра пит таҫă тӗртнӗ пир пек, шыва хăй витӗр пит сахалăн йараҫ. Курнă пулӗ: ҫул ҫинҫи тусан ҫине шыв тумлатсан, вăл ҫӗре сăрăхмасăрах типсе кайаҫ. Пирӗн патри хура тăпра ҫак иккӗмӗш ҫӗр пек: вăл пит вӗтӗ пӗрҫӗллӗ, алăпа пăҫăртасан, ванса тусан пек пулаҫ.

Ҫавăнпа хура тăпра ҫине ҫумăр ҫусан, вăл ҫӗре ҫасах сăрăхса кӗреймест, йухса кайаҫ, ҫумăр ҫуни вара пире питех усăллă пулмасҫ. Ҫапла ӗнтӗ тырăпулă аван ӳсни ҫумăр ҫунинҫен анҫах мар, ҫумăр

шывĕ çĕр витĕр сăрăхса тырă тымарсем патне çитвинҫен те килет. Çавăнпа çумăр шывĕ пĕтĕмпех тăпрана кайтăр, курăк тымарĕсем патнех çиттĕр тесен, çĕре шыва ҫасрах туртса илекен тăвас пулать.

Çĕре кĕрсессĕн шыв ҫаранса тăрать. Шултăра пĕрҫĕллĕ çĕрте вăл сахал ҫаранса тăрать, айалти сийе ҫасах çитет, тусан пек вĕтĕ пĕрҫĕллĕ çĕрте нумай ҫаранса тăрать, çĕр ăна ҫас туртса илеймест. Çавăнпа хура тăпрана тарăн йĕпетме шыв пит нумай кирлĕ. Çумăр хытă çусан та шыв унта айалалла ҫас кайаймасть, айала çитиҫҫен типсе пĕтет. Çавăнпа çуллахи çумăрсем питех усăллă мар: вĕсем çĕре тарăн нӳрлетеймеççĕ, тата кăпт хĕвел пăхсанах, çил вĕрсенех шывĕ çийелте тăнă пирки, çĕр ҫас типсе кайать. Хура çĕрĕн айалти сийĕсене çитиҫҫен хĕллехипе çуркуннехи йур шывĕ кăна кайать. Кун çинҫен епĕр кайран калаçăпăрха.

Йур çусанах епĕр хура тăпрана ҫавса пăхар: унăн çийелти сийĕ нӳрĕ, ун айĕнҫи сийĕ типĕ пулать. Тепĕр кунтан ҫавса пăхсан, çийелти нӳрĕк сирен айалти сийе çапнине куратпăр. Икĕ кунтан ҫавса пăхсан, нӳрĕк тата айаларах аннине куратпăр. Çапла çĕр айĕнҫе пĕр сирен тепĕр сийе нӳрĕк, пур си те пĕр пек нӳрĕ пулиҫҫенех куçать. Çĕрте нӳрĕк пĕр сирен тепĕр сийе куçни шыв çӳç пек çинҫе тăпра хушшинҫе çӳренĕрен килет.

Шыв çӳç пек çинҫе хушăсемпе çӳрени пуринҫен ытла хура тăпрара паллă. Унта шыв вĕсем тăрăх пĕр сирен тепĕр сийе лайăх куçать. Икĕ си хура тăпра илер: пĕри типĕ пултăр, тепри йе йĕпе, йе нӳрлĕ пултăр. Унтан вĕсене пĕрле таҫă сыпăçтарса пĕр пĕр типмелле мар вырна хурар

Ҫапла тусан, шыв ҫӳҫ пек ҫинҫе хушӑсем тӑрӑх нӳрлӗ сирен типӗ сийе кусма тытӑнат̆, икӗ сийӗ те пӗр пек нӳрлӗ пулсан тин кусма ҫарӑнат̆. Икӗ сийӗнҫе те вара шыв пӗр пек, пӗр танах пулат̆, малтанхи сийӗнҫе мӗн ҫухлӗ, тепӗринҫе те ҫавӑн ҫухлӗ пулат̆.

Ҫӗр типни те ҫавӑн пек. Ҫил вӗрнипе, хӗвел пӑхнипе малтан ҫи ҫийелти сийӗ типет. Пӑртак типсессӗн, вӑл ҫӳҫ пек ҫинҫе хушӑсем тӑрӑх иккӗмӗш сирен шыв туртма тытӑнат̆, иккӗмӗш сийӗ хӑйӗн нӳрӗкӗ сахалланнӑ пирки виҫҫӗмӗш сирен туртма тытӑнат̆, виҫҫӗмӗшӗ тӑваттӑмӗшӗнҫен туртма тытӑнат̆. Ҫийелти сийӗ йалан типсе выртат̆. Ҫавӑнпа вӑл айалти сирен йалан типӗрех пулат̆. Типнӗ пирки айалти сийӗн нӳрӗкне туртат̆. Ҫавӑн пиркийех тата иккӗмӗш сийӗ те виҫҫӗмӗш сийӗнҫен нӳрӗк туртат̆. Ҫапла вара ҫӗр йаланах типсе выртат̆. Ҫӗр типнӗ ҫух шыв ҫӳҫ пек ҫинҫе хушӑсем тӑрӑх айалти сийсенҫен ҫӳлелле хӑпарат̆.

Ҫӗр шултра пӗрҫӗллӗ, хӑйӑрлӑ пулсан, шыв ҫӳле инҫех хӑпараймаст̆; ҫавӑнпа ун пек ҫӗр ҫас та типмест. Хура ҫӗртен нӳрӗк айалтан ҫӳлелле хӑпарса пӑс пулса пӗтни лампӑри кӑраҫҫын ҫунса пӗтнӗ йевӗрлӗ. Кӑраҫҫын ҫи ҫийелтен анҫах ҫунат̆ ҫуннӑ вырӑнне айалтан хӑйу ҫипписем тӑрӑх кӑраҫҫын хӑпарат̆.

Савӑтра кӑраҫҫын пӗтсен, хӑйу пӗтӗмпех типсе ларат̆. Ҫӗр типни те ҫавӑн пек. Ҫийелти нӳрӗк пӑс пулса сывлӑша кайат̆, ун вырӑнне айалти ҫинҫе хушӑсем тӑрӑх, урӑх нӳрӗк хӑпарат̆. Нӳрӗк пӗтсен ҫӗр пӗтӗмпех типсе кайат̆. Ҫӗре типме ҫарас тесен, унӑн ҫи ҫийелти сине айалти сийӗнҫен мӗнле те пулин кӑпӑшкалатса уйӑрма тӑрӑшас пулат̆. Ҫапла тусан

ҫӳҫ пек ҫинҫе хушӑсем татӑлаҫҫӗ те, шыв вара вӗсем тӑрӑх ҫӳлелле хӑпараймасӑ, айалти сийӗсенҫе анҫах ҫӳрет.

Лампӑ хӑйуне касса татӑр, пӗр ҫип анҫах хӑварӑр. Кӑраҫҫын вара савӑтран ҫуннӑ ҫӗре хӑпараймасӑ. Ҫӗрӗн ҫийелти сине кӑпӑшкалатса айалти сийӗнҫен уйӑрни те ҫавӑн пек пулаӑ, ҫинҫе хушӑсем пӗр пӗринпе ҫыпҫӑнаймаҫҫӗ, вара нӳрӗк ҫӳле хӑпараймасӑ. Ҫавӑнпа вара айалти сийӗсем типме ҫарӑнаҫҫӗ.

Халӗ ӗнтӗ есӗр пӗлетӗр: хура тӑпраллӑ ҫӗрте тырӑ нӳрӗсӗр ан аптратӑр тесен, пирӗн анасене ҫумӑр шывне те, йур шывне те туртса илекен тӑвас пулаӑ, тата ҫӗрӗн ҫийелти сине кӑпӑшкалатса шыв ҫӳрекен ҫинҫе хушӑсене пӗтерес пулаӑ, вӗсем тӑрӑх шыв ҫӳлелле куҫҫа пӑс ан пултӑр тесе, ҫаксенҫен пуҫне тата ҫӗрте нӳрӗк усрас тесен. пирӗн акӑ мӗн хытӑ астумалла.

Авӑн уйӑхӗнҫен пуҫласа ака уйӑхӗ иртиҫҫенех пирӗн уйри ҫӗр нӳрленнӗҫемӗн нӳрленсе выртаӑ, ҫав вӑхӑтра шыв ҫӗре пит тарӑн ҫапаӑ. (Вӑл мӗншӗн пулнине енӗ урӑх ҫӗрте калӑп). Ака уйӑхӗпе авӑн уйӑхӗ хушшинҫе ҫумӑр ҫӑваӑ пулин те, ҫӗр типсе ыраӑ. Ҫав вӑхӑтра шыв пӑс пулса, ҫумӑр шывӗ ҫӗре сӑрӑхса кайиҫҫен нумай пӗтет. Ҫавӑнпа ӗнтӗ йур шывӗ ҫӗре тарӑн кайни, ҫӗре шыв хытӑ ҫапни пит кирлӗ йапала. Йур шывӗ пуринҫен ытла хура ҫӗре кирлӗ, мӗншӗн тесен хура ҫӗр хӑй вӗтӗ пӗрҫӗллӗ пирки, ҫулла ҫумӑр ҫусан, ун шывне туртса илеймест, тата вӑл ҫӳҫ пек ҫинҫе хушӑсем тӑрӑх нӳрӗк хӑпарнипе пит хытӑ типет.

Хура ҫӗр кӗркуннеҫҫенех типсе выртаӑ, уншӑн ҫуллахи ҫумӑр. ҫӗре ҫасах сӑрӑхса кӗреймен пирки, тата ҫасах типсе кайнӑ пирки питех усӑллӑ пулай-

масĭ. Çавăнпа хĕллехи йур шывĕ çĕре çаптăр тесе, пирĕн пит хытă тăрăшас пулаĭ. Тыррапулла çав нӳрĕк çулла питĕ пысăк усă кӳрет, ăна уйарпа пĕтесрен сыхласа тăраĭ.

Хăйăрлă, шултăра пĕрҫĕллĕ çĕр хура çĕр пек мар. Шыва ҫасах туртса илнĕ пирки, вăл çумăр хытă çусан çулла та çуркуннехи пекех хытă нӳрленме пултараĭ. Çапла ĕнтĕ тырăпулă уйарпа ан аптăратăр тесен, пирĕн акă мĕн тума тăрăшас пулаĭ.

1. Хĕллехи йур шывĕ çĕре тарăнтарах кайтăр, хытăрах çаптăр тесе тăрăшмалла.

2. Çумăр шывĕ те, йур шывĕ те çĕре сăрăхса кĕтĕр, айаккалла йухса ан кайтăр тесе тăрăшмалла.

3. Нӳрĕк хура çĕрти çӳç пек çинçе хушăсем тăрăх çӳлелле тухса, пăс пулса пĕтнине ҫармалла. Малалла епĕ сире çак халĕ каланă виçĕ ĕçе йепле йепле тумалли çинҫен каласа кăтартăп.

## 2. Тăпрари нӳрĕк. Курăксене усăлă шывпа усăсăр шыв. Уйа йур йепле пухмалла.

Малтан пĕлер: тырăпулă лайăх пулас пулсан ăна ӳсме мĕн ҫухлĕ шыв кирлĕ. Веренне́ сынсем курăксем çитĕннине сăнаса ак мĕн пĕлнĕ. Курăксем çитĕнсе пĕр пăт типĕ йапала, пĕр пăт вăрă, йе пĕр пăт ута, улăм парасçĕ пулсан, вĕсем хăйсен тымарĕсемпе çĕртен 300 пăт йахăн шыв туртса илесçĕ. Тымарĕсем çĕртен шывпа пĕрле курăк валли урăх йапаласем те туртса илесçĕ. Çавсем пур те тымартан курăк тунипе, курăк çулçисене сарăласçĕ. Вĕсенҫен хăшĕ курăк туни пулнă çĕре кайасçĕ, хăшĕ вăрă пулнă çĕре кайасçĕ, шывĕ çулçăсенҫен тухса сыв-

лăша кайаҭ. Вĕсенĕн вырăнне тымартан шывпа пĕрле курăка кирлĕ йапаласем каллех хăпараççĕ.

Теçеттинран 100 пăт вăрлăх, 200 пăт улăм тухаҭ пулсан, тымарсем çавăн ҫухлĕ типĕ йапалашăн сахал пулсан та çĕртен 90 пин пăта йахăн шыв илеççĕ. Вĕреннĕ çынсем тата: курăксем çĕрти нӳрĕке пĕтĕмпех туртса илейменнине пĕлнĕ. Çĕрти нӳрĕке пĕтĕмпех типмесен те, анҫах вăл курăксене кирлинҫен сахал пулсан курăксем типсе кайаççĕ.

Ана пĕлес тесен акă мĕн тума пулаҭ. Пĕр пĕр ҫӳлмекре çитĕнекен курăка шăварма ҫарăнар. Апла тусан курăк типсе кайаҭ. курăкне кăларса пăрахсан ҫӳлмекри тăпрара мĕн ҫухлĕ нӳрĕк йулнине шутласа кăларма пулаҭ. Çапла шутласа вĕреннĕ çынсем ак мĕн пĕлнĕ.

Хăйăрлă çĕрте пĕр теçеттинран пĕр аршăн тарăнăшĕнҫе шыв 12 пин пăт йахăн пулсан, курăк типсе кайаҭ, тăмлă çĕрте 80 пин пăт йахăн пулсан, типсе кайаҭ. Йеккатеринослав кĕпĕрнинҫи тăпрара 112 пин пăта йахăн пулсан, типсе кайаҭ. Çак 12 пин пăт шыв, 80 пин пăт тата 112 пин пăт шыв, курăксемпĕн усăсăр. Çавăнпа ĕнтĕ ака çинҫе тырă лайăх çитĕнтĕр тесен, теçеттинăра пĕр аршăн тарăнăш сире шыв халĕ калапă хисепрен ҫылай нумай пулас пулаҭ.

Çĕр çавăн ҫухлĕ шыва ăçтан илсе çитеретши? Пĕр пăт типĕ йапала ӳстерме курăксене 300 пăт шыв кирлĕ пулсан, пĕтĕм уйа мĕн ҫухлĕ шыв кирлĕ пулĕ? Пуринҫен çĕр йур шывĕнҫен нӳрĕк нумай илет. Нумайĕшĕ йур шывĕ çĕре çуркунне анҫах сăрăхаҭ теççĕ.

Анҫах вăл апла мар. Вĕреннĕ çынсем хĕлле уйра выртакан йура сăнаса акă мĕн курнă. Авăн уйăхĕнҫен пуçласа хĕл каçиҫҫенех йур айĕнҫи çĕр пӳ-

релнӗҫемӗн нӳрелсе пырать. Кӑрлаҫ уйӑхӗнҫе пӗр аршӑн сийлӗ ҫӗрте шыв 80 пин пӑт ытларах пулать. Вӑл ак мӗнтен килет. Кӗркунне йур ҫӑвиҫҫен ҫӗр шӑнса хытса ларать.

Хӗллехи йур ӑна хулӑмӑн хупласа илсен вӑл ӑшӑнса ирӗле пуҫлать. Хулӑм йур ҫийелтен хупласа тӑрса ӑна шӑнма памасть. Ҫӳлте йур сийӗнҫе 15 — 20 крат. сивӗ пулсан та, йур айӗнҫе сивӗ 0 кратӑсран ытла пулмасть. Ҫӗрӗн айалти сийӗсем хӗлле те ӑшӑ тӑраҫҫӗ. Вӗсем хӑйсен ӑшшине ҫӳлти сийе параҫҫӗ. Ҫӳлти сийӗ ӑшӑнать те хӑй ӑшӑннипе хӑй ҫумӗнҫи йура ирӗлтерет. Йур ирӗлсе шыв пулать те, ӑшӑнса ҫемҫелнӗ ҫӗре сӑрӑхса кӗрет. Ҫӗр ҫумӗнҫи йур ирӗлсе хӗлӗпех ҫӗре сӑрӑхса тӑрать.

Ҫавӑнпа хӗлле ҫӗр нӳрелнӗ ҫемӗн нӳрелсе пырать. Авӑн уйӑхӗнҫе пӗр аршӑн тарӑнӑш сийре 100 пайран 14 пай анҫах шыв пулать. Ҫӳк уйӑхӗнҫе шыв 6 вершука йахӑн ҫапать, 100 пайран 20 пайа ҫитет. Раштав уйӑхӗнҫе шыв 8 вершук ҫапать. Кӑрлаҫ уйӑхӗнҫе 12 вершук, нарс уйӑхӗнҫе аршӑн ытла ҫапать.

Ҫапла ӗнтӗ ҫӗре йур хулӑмӑн витсе тӑни пит кирлӗ, вӑл пит усӑллӑ йапала: ун айӗнҫе ҫӗр хӗлӗпех шыв туртса нӳрелсе выртать, ҫуркунне те ҫӗр ҫемҫе пирки шыв ӑна хытӑрах ҫапать, Уйра йур ҫӳхе пулсан, ҫӗр хӗлӗпех шӑнса выртать, шыва туртса илеймест. Ҫуркунне пулсан та йур шывӗ ҫӗр ирӗлмен пирки ҫӗре кӗреймест.

Ҫавӑнпа пирӗн хамӑр анасем ҫине йур нумайтарах купалантӑр, ҫӗре шывӗ хытӑрах ҫаптӑр тесен, пирӗн мӗн тумаллаши? Уйа йур нумайтарах пухма вӑрмансем нумай пулӑшаҫҫӗ. 1891-мӗш ҫулта Йеккатеринослав кӗпӗрнинҫе вӑрманлӑ уйра ҫара уйрин-

ҫеп тырӑ виҫӗ хут лайӑхрах пулнӑ. Ҫав ҫулах тата вӑрманлӑ ҫӗрте пӗр аршӑн сийре 100 пайран 21 пай шыв пулнӑ, ҫара уйра 17 пай пулнӑ. Ҫав пайсенҫен тырӑпулӑ кирлӑ мар шыва 14 пай кӑларсан, вӑрманлӑ ҫӗрте усӑллӑ шыв 7 пай, ҫара ҫӗрте 3 пай кӑна пулат.

Ҫав уйсенҫи шыва пӑтпа шутласан, малтанхи уйра 60 пин усӑллӑ шыв пулат, ҫара уйра 25 пин пӑт пулат. Епӗр 300 пӑт шыв пӗр пӑт типӗ йапала пулнӑ ҫӗре кайат терӗмӗр. Ҫавӑнпа уйри усӑллӑ шыва 300 пайа уйӑрсан, кашни уйран миҫе пӑт тырӑ тухнине пӗлетпӗр: вӑрманлӑ уйра теҫеттинрен 70 пӑт вӑрӑпа 130 пӑт улӑм тухат. Тулӑ кӗпӗрнинҫе ҫара уйра 30 пӑт вӑрӑпа 50 пӑт улӑм тухат.

Хӗл хушшинҫе йур вӑрмана анҫах мар вӑрман патӗнҫи уйсене те пухӑнат. Тулӑ кӗпӗрнинҫе пӗр уйӑн виҫӗ йенҫе вӑрман пулнӑ. Ҫав уйра 1891-мӗш ҫулта 90 пӑт вӑрлӑх пуҫтарнӑ, ҫара уйри анасем ҫинҫен вӑрлӑхне те аран аран тавӑрнӑ. Вӑрман йур пухма питӗ аван йапала. Ҫапах та епӗр хамӑр уйсене каллех вӑрман тӑвас тесе шухӑшлас ҫук.

Ҫавӑнпа пирӗн тырӑ пулман, сайа кайса выртакан хӑйӑрлӑ вырӑнсене: варсене те, ҫырмасене те пулин йӑвӑҫ лартса тултарма тӑрӑшас пулат. Вӗсем те нумай йур пухса тӑма пултараҫҫӗ. Уйа йур пухма тата ҫӗрӗ картасем нумай пулӑшаҫҫӗ: ҫара уйра ҫунӑ йура ҫил хӑш ҫухне йалт урӑх ҫӗре вӗҫтерсе кайат. Ҫавӑн пек пуласран йура ҫӗрӗ картасем ҫараҫҫӗ, вӗсем ӑна пӗр вырӑнта тытса тӑраҫҫӗ.

Курнӑ пулӗ уйра пӗр пӗҫӗк тӗмӗ пулсанах ун йӗритавра йур купаланат. Апла пулсан, ҫӗрӗ карта тавра йур тата нумайтарах пухӑнмалла. Анҫах ҫӗрӗ картапа еҫӗр ҫавах пӗтӗм уйа йур пухас ҫук. Унӑн

çӳллӗшӗ пӗр ҫалӑш пулсан, вӑл йура хӑй йӗритавра пилӗк ҫалӑш кӑна пухма пултарать. Ҫӗрӗ карта тата хакла ӳкет, суха тума та ҫӑрмантарать, вырӑн та ытлашши илсе ларать. Ҫавӑнпа уйа йур пухас тесе, хӑшӗ тата акӑ мӗн тӑваҫҫӗ.

Уйа ырашпа пӗрле ҫас ҫитӗнекен курӑк вӑррисем акаҫҫӗ. Вӗсем сивӗ пулиҫҫен ҫылай ҫитӗнеҫҫӗ, сивӗ пулсан пӗтӗмпех пӗтеҫҫӗ, тункати анҫах ларса йулать. Вӗсем вара йура ҫарса тӑраҫҫӗ, ыраш анине хытӑрах йӗпетме пулӑшаҫҫӗ. Уйа йур пухӑнни питӗ кирлӗ йапала.

Анҫах ҫӗрӗҫлекенӗн ҫавӑнпах ҫарӑнас пулмасть: унӑн ҫӗре ҫав йур шывне пит ҫас туртса илекен тӑвас пулать. Апла тумасан йур шывӗнҫен усӑ нумайах пулмасть, шыв ҫӗре кӗреймесӗр йухса кайма пултарать. Ҫавӑнпа йур шывӗ ҫӗре кӗтӗр, ӑна хытӑрах ҫаптӑр тесе, пирӗн кӗркунне анасене сухаласа хӑварас пулать. Кӗркунне анасене сухаласа хӑварни унта йур пухнинҫен те усӑллӑрах. Тата ку ӗҫ йӑвӑр та мар. Ҫавӑнпа кирек камӑн та кӗркунне хӑй анине йепле те пулин сухаласа хӑварас пулать.

Сухаласа хӑварнӑ ана сухаламаннинҫен темиҫе хут нӳрӗ пулать. Йеккатеринослав кӗпӗрнинҫе сухаласа хӑварнӑ теҫеттинере пӗр аршӑн тарӑнӑш сийре 100 пайран 26 пай шыв пулнӑ, сухаламаннинҫе 18 пай пулнӑ. Ҫав пайсенҫен тырра усӑсӑр 14 пайа кӑларсан, малтанхи ана ҫинҫе 12 пай, тепӗринҫе 4 пай усӑллӑ шыв пулать. Ҫав пайсене пӑтпа шутласан сухаланӑ теҫеттинере 96 пин пӑт шыв пулать, сухаламаннинҫе 35 пин пӑт пулать. 96 пин пӑт шыв 100 пӑт ытла вӑрӑ пама пултарать. 35 пин пӑт шыв 40 пӑт анҫах пама пултарать.

Ҫапла ӗнтӗ тырӑпулӑ ҫула ҫумӑрсӑр ан аптӑратӑр тесен, пирӗн нуринҫен малтан анасене кӗркунне

сухаласа хăварас пулаҫ. Çапла тусан çĕре нӳрĕк икĕ хут ытларах çапаҫ, тарăнтарах кайаҫ, типессе те ҫас типсе пĕтеймест. Камăн тата май пур, камăн вăй çитет, унăн хăй ани çине йур нумайтарах пухма тăрăшас пулаҫ. Малалла епĕ çулла уйар ҫух анасем типсе кайасран мĕн тумалли çинҫен каласа парăп.

## 3. Хура тăпра ĕçленĕрен улăшăнни. Мĕншĕн улăшăнни. Куракçем çĕре типĕтни.

Çуркуннепе кĕркунне хушшинҫе анасене йепле ĕçлемелли çинҫен калиҫҫен малтан тăпра муклашкисем пĕр пĕринпе йепле çыпçăнса тăнине пĕлер. Тырă акас пулсан, епĕр çĕре сухаласа çемçететпĕр. Анҫах çĕре тĕрлĕ çемçетме пулаҫ. Илер хура тăпрана. Хура тăпрана сухаласа сӳресе кĕл пек пулиҫҫен кăпăшкалатма пулаҫ. Çапла тусан тăпранăн вĕтĕ пĕрҫисем пĕр пĕринпе хытă çыпçăнса тăмаççĕ, кĕт тĕкĕнсенех саланса кайаççĕ.

Тепĕр терлĕ кăпăшкалатсан ана ҫышкă пысăкĕш муклашкаллă пулаҫ. Çапла тусан муклашкасем пĕр пĕринпе çыпăçăнмасăрах выртаççĕ, пĕр пĕринпе çирĕп çыпçăнса уйăрăлмасăр тăраççĕ. Анана тата тепĕр тĕрлĕ кăпăшкалатсан, ун çинҫе пысăк муклашкасем анҫах выртакан тума пулаҫ. Тырă лайăх пултăр тесен, анана сухаласа сӳресе хăшĕн пек кăпăшкалатмаллаши? Сăнас пулаҫ, çавăн пек кăпăшкалатас пулаҫ.

Анҫах ана çинҫи хура тăпра кĕл пек ĕнсе выртни, унтан каллех хытса кайни мĕнтен килет вăл? Ак мĕнтен. Хура тăпрара икĕ йапала пур, вĕсем йĕпенсен пит çыпçăнакан пулаççĕ. Çав йапаласенҫен пĕри тăм, кирпĕҫĕ тăвакан тăм мар, шурă ҫапкăсем тăва-

кан таса тăм; тепри куракссенђен çĕрсе пулнă (çĕрĕк тăпра). Хура тăпрара çав икĕ çыпăçтаракан йапала та: тăм та, çĕрĕк йапала та нумай. Çавăнпа хура тăпра муклашкаллă пулса выртаĭ те. тăмпа çĕрĕк тăпра ђул çурт тунă ђух кирпĕђĕсем хушшине хуракан ђемĕнт пек; вĕсем пĕрђисене, муклашкасене хытă çыпăçтарса тăраççĕ.

Анђах вĕсем иккĕшĕ те пĕр пек мар, икĕ тĕрлĕ. Тăмпа хăйăра йĕпетсе пĕрле хутăштарсан, вĕсем пĕр муклашка пулаççĕ, типсе çитсен хытса кайаççĕ. Çав муклашкана кайран йĕпетсен, татах типĕтсен, вăл çирĕппипех тăрса йулаĭ. Çапла ĕнтĕ тăм темиçе хут йĕпенсен те, хăйĕн çыпçăнакан хăватне çухатмасĭ. Çĕрĕк тăпра апла мар. Нӳрлĕ тăпра ăшăнђе вăл тăмран вунă хут ытларах çирĕп çыпçăнаĭ. Анђах унпа çыпăçтарса муклашка тусан, çав муклашка тепĕре йĕпениђђен кăна çирĕп тăраĭ. Йĕпенсенех вăл саланса, ванса пĕтет, мĕншĕн тесен унăн, тепĕре йĕпенсен, çыпçăнакан хăваđĕ пĕтет.

Татах çыпçăнакан тăвас тесен, çав çĕрĕк тăпрана нӳрлĕ çĕре хурас пулаĭ. Нӳрлĕ çĕрте вăл тата малалла çĕрет те, каллех çыпçăнакан пулаĭ. Çав çĕнĕрен пулнă çĕрĕк тăпра тепĕре йĕпениђђен çĕр пĕрђисене, муклашкасене çирĕп çыпăçтарса тăраĭ. Типнĕ ђух çĕрĕк тăпра хăйĕн çыпçăнакан хăватне анђах мар, хăйпе пĕрле тăм хăватне те пĕтерет. Çавăнпа ĕнтĕ хура тăпра çĕре сухаланă ђух, пысăк муклашкасем пулаççĕ пулсан, çав муклашкасем типсе хытса кайаççĕ, вĕсене пуртăпа çапса ватма та хĕн.

Анђах çумăр çусанах çав муклашкасем йĕпенеççĕ те, хăйсем йеверĕпе хăйсем ванма тытăнаççĕ, çăмăл сӳрепе сӳресенех йăлт ванса кайаççĕ. Мĕншĕн вăл апла пулаĭ? Мĕншĕн тесен йĕпенсен çĕрĕк тăпранăн

çыпçӑнакан хӑваҫӗ пӗтет. Анҫах çав тӑпрах пӑртак типсе выртсан каллех çыпçӑнакан пулаҭ. Вӑл çыпçӑнакан çӗрте çӗнӗрен урӑх çӗрӗк тӑпра пулнинҫен килет.

Хура çӗр муклашкинҫе тӑм нумай пулсан та, вӑл та йӗпенсен ванса кайаҭ. Вӑл мӗнтен пулнине çӗрӗçлекен сыннӑн пит астӑвас пулаҭ. Ҫей ҫашкисем тӑвакан тӑма илер. Ӑна çӑнӑх пек вӗтӗ пулиҫҫенех тӗвӗр, унтан шывра пӑтратӑр. Çапла тусан тӑм пӗрҫисем шывра ирӗлсе кайаççӗ те, шыв вара сӗт пек шурӑ пулаҭ. Çав шыва ик çул иртеҫҫен лартсан та, вӑл çаплах сӗт пек шурӑ тӑраҭ, тӑм шывран уйӑрӑлса айала анмасҭ.

Анҫах çавӑнта кӑшт тӑвар йарсанах ирӗлнӗ тӑм пӗрҫисем ҫӑмӑртанма тытӑнаççӗ те айала пухӑнаççӗ; шыв вара тӑрӑлса йулаҭ. Тӑвар нумайтарах йарсан тӑм пӗрҫисем хӑвӑртрах хутланса ҫӑмӑртанаççӗ. Тӑм тӑпрара та çавӑн пекех хӑтланаҭ. Тӑпрари шыв йӑлтах таса мар, ун ӑшӗнҫе мӗн ҫухлӗ те пулин ирӗлнӗ тӑвар пур. Тӑвар пуртан тӑпрари тӑм хутланаҭ те, хӑй хутланҫӑксемпе тӑпра пӗрҫисене çыпçӑнтарса тӑраҭ.

Тӑпрара мӗн ҫухлӗ тӑвар нумай, çавӑн ҫухлӗ тӑпра муклашкисем çирӗп пулаççӗ. Çумӑр шывӗнҫе тӑвар çук. Çавӑнпа вара, çумӑр çусан, çумӑр шывӗ тӑпрари тӑвара хӑйпе пӗрле айала илсе кайаҭ, тӑпрари тӑм тӑвар çукран пӗтӗмпех ирӗлсе кайаҭ. Тӑпра муклашкисем вара çирӗп çыпçӑнса тӑраймаççӗ, хӑйсемех салана салана кайаççӗ.

Çумӑр иртсе кайсан, çӗр çийелтен типме пуçлаҭ, вара айалтан тӑвар шывпа пӗрле каллех хӑпараҭ те, çӗре хытарса лартаҭ. Вӑл акӑ йепле пулаҭ. Çӗрӗп малтан çийелти сийӗ типет. Пӑртак типсен вӑл айал-

ти сирен ҫӳлелле нӳрӗк туртма тытӑнаҭ. Нӳрӗкпе пӗрле ҫӳле тӑвар та хӑпараҭ. Тӑвар тӑм пӗрҫисене хутлантараҭ, лешшем хӑйсен хутланҫӑкӗсемпе ҫӗр муклашкисене пӗрле ҫирӗп ҫыпҫӑнтарса хураҫҫӗ. Ҫӗр вара ҫийелтен хытса кайаҭ. Ҫавӑнпа ҫав хытӑ ҫӗре сӳресен, ҫийӗ муклашкаллӑ пулаҭ. Ҫав ҫӗрех типсе кайиҫҫен сӳресен тӑпра кӗл пек ванса кайаҭ.

Ҫавӑнпа нихҫан та тӑпрана ҫумӑр хыҫҫӑн тӳрех сӳреме йурамасҭ, пӗр вершук йе ҫур вершук типсен тин сӳрес пулаҭ. Ҫапла тусан анара нӳрӗк те вӑрах тӑраҭ, тырӑпулӑ та лайӑхрах пулаҭ. Вӑл акӑ мӗнтен килет. Анана сухаламасан ун ҫийелти сийӗ хытса лараҭ. Ҫавӑн пек ҫух вӑл шыва пит вӑрахӑн сӑхаҭ, ҫумӑр шывӗ вара йе лупашкасене пухӑнаҭ, йе, ана тайлӑм пулсан, йухса кайаҭ, ҫӗре лайӑхрах нӳретмест. Тата ҫитменнине хытса кайнӑ хура тӑнрара ҫӳҫ пек ҫинҫе хушӑсем тӑрӑх нӳрӗк айалтан ҫӳле хытӑ пит нумай хӑпараҭ, ӑшӑпа пӑс пулса вӗҫҫе кайаҭ.

Ҫавӑнпа хытса кайнӑ хура тӑпра сӑхал хушӑрах тем тарӑнӑш типсе кайаҭ. Хура тӑпрана сухаласа, сӳресе кӗл пек туни ҫӗре те нӳрӗк тытас йенҫен аван мар. Кӗл пек кӑпӑшкаланнӑ ана ҫумӑр пулсанах ҫийелтен хытса кайаҭ. Тепӗр ҫумӑр пулсан шыв вара айалалла кайаймасҭ, ҫӗре ҫийелтен анҫах йӗпетет. Ҫакӑн пек ана ҫинҫе тата нӳрӗк те ҫас пӗтет. Тӑпрари нӳрӗк ҫӳҫ пек ҫинҫе хушӑксем тӑрӑх, пуринҫен ытла ҫӗр ӑҫта хытӑрах ҫыпҫӑнса тӑраҭ ҫавӑнпах тухаҭ.

Ҫийелти сийӗ ҫыпҫӑнса ҫирӗп хытнӑран вӑл ай алтан ҫӳле куҫаҭ те, пӑс пулса сывлӑша кайаҭ. Ҫапла ӗнтӗ, кӗл пек ванса вырткакан ана ҫӗрти нӳре тытса тӑрайма сҭ, ҫас типсе кайаҭ. Пысӑк муклашкаллӑ сухаланӑ ана тата наҫартарах. Пысӑк муклашкасем хуш-

шипе çумăр шывĕ суха тĕкĕнмен сийе кайасси аван кайаҫ, анҫах муклашкасем хăйсем çирĕп нирки пит вăрахăн йĕпенеççĕ. çумăр шывĕ вĕсем çинҫен йухса анаҫ. Пуринҫен ытла пысăк муклашкаллă ана нӳрĕк тытманнинҫен наҫар. Ана сухаламан ҫухнехи пек тикĕс выртаҫ пулсан, унăн нӳрĕк тухакан вырăн сахалтарах, нӳрĕк ун çийĕнҫен анҫах тухаҫ. Ана муклашкаллă выртаҫ пулсан, нӳрĕк унăн çийĕнҫен те, тата муклашкасен пур йенҫен те тухаҫ

Çавăнпа нӳрĕк нумайтарах пĕтет. Суха тĕкĕнмен айалти сийсенҫен нӳрĕк çӳле çӳç пек çинçе хушăсем тăрăх хăпараҫ. Ана пит пысăк муклашкаллă пулсан, муклашкасем хăйсен айĕнҫи хытă сийе витсе хупласа тăраймаççĕ Çавăнпа нӳрĕк унтан тӳрех сывлăшa кайаҫ. Çапла вара пĕр вăхăтрах сухаланă сийĕ те, сухаламан сийĕ те типсе выртаҫ. Çĕрте нӳрĕк тытма сухаланă сийе вĕтĕ муклашкалли пуринҫен аван. Çакăн пек ана çинҫе шыв вĕтĕ муклашкасем хушшипе айалалла ҫасах анса кайаҫ.

Муклашкаллă сий айалти нӳрлĕ сийне хупласа тăраҫ, тата çакă икĕ сий таҫă çыпăççа тăмаççĕ, çавăнпа вĕсем хушшинҫе шыв çӳрекен çинçе хушăсем те çук. Çавăнпа айалти нӳрĕ çӳле хăпараймасҫ, çĕр те вара хытах типмест. Вĕтĕ муклашкаллă сухалани тата акă мĕнтен аван. Ун пек ана, çумăр çусан та, ҫас хытмасҫ; ытла нумай çусан пит хытса лараҫ.

Анҫах анана та çапла хытнипех хăварма йурамасҫ. Апла хăварсан тепĕр çумăр шывĕ çĕре сăрăхса кĕреймĕҫҫĕ, тата хытнă пирки çĕр те хытăрах типĕҫҫĕ. Çавăнпа типме тытăнсанах анана кăпăшкалатса хурас пулаҫ. Анҫах васкас пулмасҫ: типмесĕр сийне кăпăшкалатма йурамасҫ, вăл кĕл пек ванса кайаҫ, тепĕр пĕҫĕк çумăр пулсан, каллех хытса кайаҫ. Йĕ-

пе ӡухнех сӳресен ана тата наӡартарах пулаҭ, ҫӗр тикӗс выртмасҭ, хытасса тата хытӑрах хытса лараҭ. Ҫавӑнпа ҫӗр хытӑ типет.

Кӑпӑшкалатаӡӡен ҫӗре ҫийелтен кӑшт типме парас пулаҭ. Ҫийелтен кӑшт типшӗнсен вӑл айалтан шыв туртма тытӑнаҭ. Шывпа пӗрле тӑвар хӑпараҭ. Ҫавӑнпа пӑртак типнӗ анана сӳресен вӑл хӑй айӑнӡе тӑвар пур пирки вӗтӗ ҫирӗп муклашкаллӑ пулса выртаҭ. Икӗ сий пӗрпӗринпе таӡӑ сыпӑҫҫа тӑман пирки нӳрӗк айалтан ҫӳҫ пек ҫинҫе хушӑсем тӑрӑх ҫӳле хӑпараймасҭ. Ҫавӑнпа вӗтӗ муклашкаллӑ ана ӡас типмест.

Ҫийелтен кӑпӑшкалатнӑ сий айалти сийпе таӡӑ сыпӑҫҫа тӑмасҭ, унтан уйӑрӑлса тӑраҭ. Вӗсем хушшинӡе ҫӳҫ пек ҫинҫе хушӑсем ҫук. Ҫавӑнпа айалти нӳрӗк вӗсем тӑрӑх ҫӳле хӑпармасҭ. Ҫапла вара ҫийелти кӑпӑшка сий хӑй типсен те, айалти нӳрӗ сийе типме памасҭ, ӑна типесрен хӳтӗлесе тӑраҭ. Ҫийелти сий типсе тӑнӑ пирки ҫӗреймест, унта вара курӑксене кирлӗ апат та хатӗрленеймест.

Тырӑ тымарӗсем ҫийелти сийре мар, айалти сийре пулаҫҫӗ. Вӗсем ӑҫта нӳрӗк пур, ӑҫта ҫимӗҫ пур, ҫавӑнта пулаҫҫӗ, ҫӑвӑнтан апатҫимӗҫ илеҫҫӗ. Курӑксӑр, тырӑсӑр ҫара анасем ҫийелти сийӗнӡен нӳрӗк пӑс пулса тухнӑран типеҫҫӗ. Ана ҫинӡе курӑк мӗн, йе тырӑпулӑ ҫитӗнет пулсан, вӑл урӑхла типет. Ӗлӗк ҫитӗнекен курӑк айӗнӡе ҫӗр нӳрӗрех пулаҭ тесе шухӑшланӑ. Ҫавӑнпа вӗсем ҫийелти сий типнине сӑнаса кӑна каланӑ.

Анӡах вӑл апла мар. Ӡӑнах та, курӑксен айӗнӡе ҫӗр хӗвел хӗртнинӡен тата ҫил вӗрнинӡен сыхланса выртнипе ҫара уҫӑ ҫӗртинӡен нӳрӗрех. Анӡах тарӑнтарах ӡакаласа пӑхсан, епӗр ҫӗр урӑхла типнине

куратпăр. Епĕ калачăҫҫĕ: пĕр теҫеттинран 100 пăт вăрă, 200 пăт улăм илес тесен, 90 пин пăт шыв кирлĕ тесе. Ҫав шыва тымарсем тăпраран илеҫҫĕ, шыв курăк тунисене, тураҫĕсене сарăлать, йулашкинҫен ҫулҫăсем патне ҫитет те, пăс пулса сывлăша уйăрлса кайать. Курăк тымарăсем ҫийелти сийре мар, айалти нӳрĕ сийре пулаҫҫĕ, ҫавăнтан вĕсем уптан курăк валли нӳрĕк туртаҫҫĕ. Ҫавăнпа айалти сийĕсем хытăрах типеҫҫĕ те. Пуринҫен ытла ăҫта типĕ, ăҫта тымар нумай, ҫавăнта пулать.

Акнă ана акманнинҫен ҫылай нумай типĕрех пулать. Ҫакна лайăхрах сăнаса илес тесе икĕ йунашар уҫҫаскă илнĕ. Пĕр уҫҫаски ҫине йури нимĕн те акман, тепри ҫине вăрăм тымарлă ҫутсерна йатлă курăк акнă. Ака уйăхĕн 2-мĕш кунĕнҫе ҫак уҫҫаскăсенҫе шыв ака мĕн ҫухлĕ пулнă. 3 вершук тарăнăшĕнҫе ҫара шыв 100 пайран 29 пай, акнă анара 27 пай пулнă. 8 вершук тарăнăшĕнҫе икĕ анинҫе те 91 пай шыв пулнă. 13 вершук тарăнăшĕнҫе ҫара анара 13½ пай, акнă анара 10 пай шыв пулнă.

Ҫапла ĕнтĕ ҫуркунне икĕ уҫҫаскăри шыв хуппи питех пысăк пулман. Ҫурла уйăхĕн 6-мĕш кунĕнҫе виҫҫе пăхсан ак мĕн курпă. Ҫара анара 3 вершук тарăнăшĕнҫе шыв 28 пай, акнинҫе 24 пай пулнă; 13 вершук тарăнăшĕнҫе ҫара анара 16½ пай, акнинҫе 3 пай кăна шыв пулнă. Ҫапла ĕнтĕ икĕ ана ҫинҫи нӳрĕк хушши ҫийелти сийре пысăках мар. Анҫах тарăн кайнăҫемĕн нӳрĕк хушши пысăкланса пырать, 13 вершукра 13½ пайа ҫитет.

Ҫавăнпа ĕнтĕ тырăпулă ӳстернĕ ҫух, пирĕн ана ҫине ҫумкурăксем хăварма йурамасть. Вĕсенҫен епĕр пит пысăк сийен куратпăр. Вĕсен айĕнҫе ҫĕр пит хытă типсе кайать. Ҫитменнине тата ҫĕрĕ ҫийелтен тип-

мест, самай тымар çитекен çĕрте типсе кайат. Аçта кураĕк тымаррисене нӳрĕк кирлĕ, унта вăл сахаллансах йулат. Çийелти сий типпи питех сийенлĕ мар, унта нӳрĕк тымарĕсем çук, вăл тата кăшт çумăр çусан та нӳрелме пултарат. Айалти сий нӳрĕкĕ типпи пит пысăк сийен: тымарĕсем типĕ тăпра айне тăрса йулаççĕ, тата унти çĕре хĕллеҫҫен те нӳрĕк тарăн çапас çук.

Кураксенҫен типĕ вырăна ырап аксан, вăл кăшт çумăр сусанах, аван шăтса тухат. Анҫах çав ыраш тымарĕ типсе кайнă çĕре çитсен çитĕнме ҫаранат. Çавăнпа вĕсем йур айне вăйлăланмасăрах кĕреççĕ, вĕсем çӳлти сийре анҫах пулаççĕ. Çакăн пек калҫа сивĕпе те, уйарпа та аптăрама пултарат. Ана çинҫе çумлă кураксем çитĕнни тата акă мĕнтен сийенлĕ. Вĕсем тăпрари тырăпулла кирлĕ йапаласемпе тăранса пурăнаççĕ, тырра кирлĕ çимĕç сахаланса йулат. Çавăнпа пирĕн анасем çинҫи çум кураксем шăтса тухсанах пĕтерме тăрăшас пулат, вĕсене çитĕнме пама йурамаст.

## 4. Тĕрлĕ çĕртме. Хура çĕртме, ăна йепле тумалла.

Тĕрлĕ тырă акма анана темиçе тĕрлĕ ĕçлеççĕ: çуртырри акмалла пулсан пĕр тĕрлĕ, ыраш акмалла пулсан тепĕр тĕрлĕ. Ку ҫухне тата ыраш акма та пур çĕрте ыраш акмалли анана кĕркуннех сухаласа хăвараççĕ çуркунне, çулла ăна татах сухалаççĕ. Çапла сухаланă ана çине кураксем шăтаймаççĕ, вăл хупхура курăнса выртат, çавăнпа ун пек çĕртмене хура çĕртме теме пулат.

Хăш çĕрте ыраш акмаллла уйсене çуркунне—кĕркунне, йе çуркунне иртерехпе тин сухалаççĕ. Çавăн пек çĕртмене сухалиҫҫен ана çине кураксем тухса

çитĕннĕрен симĕс çĕртме теме йурат̆. Хăш çĕрте çĕртме уйне çĕртме уйăхĕн 20-мĕш кунĕнҫе тин сухалама тытăнаççĕ. Хăш çĕрте тата çĕртме уйĕ çара ан выртттăр тесе, унта малтанхи суха хыççăнах ҫас çитĕнекен курăксем акаççĕ. Вĕсене Питрав ҫухне çулса илеççĕ, анине çĕнĕрен сухаласа пăрахаççĕ. Çак çĕртмене курăк акнă çĕртме теме пулат̆.

Епĕр малтан хура çĕртме çинҫеп калаçăпăр. Вăл пуринҫен те усăллă çĕртме: çак çĕртмере çĕр нумай канса выртат̆, хытă çĕрет, йусанса çĕнелет, вара унта тырăпулă та лайăх ӳсет. Çĕртме уйне кĕркунне сухаласа хурсан, шыв çĕре хытăрах çапат̆, тарăнтарах кайат̆. Пĕр аршăн таран çĕртме—шыв 100 пайран пĕр пайĕ анҫах пулсан та, вăл та пулин теçеттинăра 30 пăта йахăн вăрлăхпа улăм парат̆.

Кĕркунне сухаласа хурсан тăпрара шыв пĕр пай анҫах мар, темиçе пай ытларах пулат̆. Анана кĕркунне сухаласа хуни тата ака мĕнтен усăллă. Кĕркунне сухаланă çĕр хытăрах шăнат̆. Хытă шăннă çĕрте тыра лайăхрах пулат̆. Вăл акă мĕнтен килет. Ана çинҫе шыв пур тĕлте те пĕр пек шăнмаст̆, тĕлĕн тĕлĕн шăнат̆, вĕсен хушшинҫи çĕр шăнмасăрах тăрат̆. Шăнса пăр пула пуçланă вырăна йĕритавра тăракан шыв пухăнат̆. Çапла ана çинҫе вырăнăн вырăнăн пăр куписем пулаççĕ, вĕсен хушшинҫи тăпра нӳрĕкĕ пăр купине куçнă пирки елĕкхинҫен типĕрех пулат̆.

Нӳрĕк пĕтнĕçемĕн çĕр лапҫăнса ларат̆, типсе кайат̆, кайран çурăла çурăла пĕтет. Йулашкинҫен çак шăннă çĕр йалт ванса кайса пĕҫĕк çирĕп муклашкаллă пулса выртат̆. Вĕтĕ муклашкаллă çĕр нӳрĕке лайăх тытат̆. Çавăнпа тăпра хĕлле шăнни аван вăл.

Çĕртме уйне кĕркунне тарăн сухаламаллашп? Ана çинҫе курăк мĕн çук пулсан, ним хăрамасăрах тарăн

сухаламa йурат, суха кассисене аплипех хăварас пулат, вĕсем йур пухса тăҫҫăр, шыва йухса кайасран ҫарса тăҫҫăр. Курăк ҫитĕннĕрен ҫĕр ҫеремленсе кайнă пулсан, йе тислĕк тăкнă пулсан, ăна тарăн сухаламa йурамаст. Тарăн сухаласан навус та, курăк тунисем те пĕтĕмпех тăпра айне пулаҫҫĕ, вĕсем патне сывлăш кĕреймест, ҫавăнпа вĕсем ыраш акас вăхăт ҫитиҫҫен ҫĕрсе тăпра пулаймаҫҫĕ, ыраш калҫине усă та нумайах кӳреймеҫҫĕ.

Курăклă йе тислĕклĕ анана тарăн сухалама кирлĕ мар. Тарăн сухаламасан тислĕк те, курăксем те ҫас ҫĕреҫҫĕ, ҫийелти кăпăшкаллă ҫĕре айалти ҫирĕп нӳрлĕ сийрен уйăрса тăраҫҫĕ, ҫĕре типме памаҫҫĕ. Пуринҫен ытла вĕсем ҫуркунне тăпрари нӳрĕке пит лайăх сыхласа тăраҫҫĕ.

Кĕркунне сухаласа хунă ана нумай шыв туртса илнĕрен ҫуркунне пусăранат, тикĕсленсе ларат. Ҫуркуннепе ҫулла ана типсе ан кайтăр тесе, ăна ҫаплипех хăварма йурамаст, сӳреме май килсенех — ҫийелтен пĕр ҫур вершук типсенех сӳресе хурас пулат. Вара вăл вĕтĕ муклашкаллă пулса саланса кайат, айалтан нӳрĕке туртса илеймест, хăй витĕр ҫумăр шывне ҫас йарат, тата кăшт ҫумăр ҫунипех хытса лармаст.

Малтанхи сӳре лайăх пулсан кайран ҫас ҫасах сӳремесен те йурат. Анҫах малтанхи сӳре хыҫҫăнах вăйлă ҫумăр ҫусан анана тепĕр хут сӳрес пулат. Ҫумăр ҫумасан ана вĕтĕ муклашкаллă пулат. Айалти сийĕпе ҫийелти сий хушшинҫе ҫӳҫ пек ҫинҫе хушăксем ҫук пулсан, анана пĕр уйăх иртиҫҫен сӳремесен те йурат. Ҫĕртме уйне тата курăк шăтса тухса анана пусса илесрен сыхлас пулат. Ҫав кирлĕ мар курăксем тыррапулла мĕн ҫухлĕ сийен тунине пĕлетĕр ĕнтĕ есĕр.

Çавăнпа çĕртме уйне кураксем тухсанах вĕсене сӳрепе сӳресе пĕтерме тăрăшас пулаӗ. Çамрăк курăксене пĕтерме йăвăрах мар. Вĕсем хăйсемех хăшӡухне хĕвел хытă хĕртнипе, йе çил вĕрнипе типсе ларасçĕ. Анӡах курăк хăй типсе ларассине шанма йурамасӗ, ăна шăтса тухсанах пĕтерме тăрăшас пулаӗ: çитĕнсен, вăл вăйлăланаӗ, ăна пĕтерме хĕн.

Çĕртме ани çинӡе çитĕнекен куракеем тĕрлĕ пулаççĕ. Вĕсенӡен хăшĕ пĕр çул анӡах пурăнаççĕ: вĕсем çуркунне шăтса тухаççĕ те, çав çулах вăрă кăлараççĕ, унтан вара типсе хăрса кайаççĕ. Хăшĕ çав пĕр çул пурăнакан курăксене пĕтерме хĕн мар теççĕ: вăррисем пулса çитеӡӡен вĕсене хăйсене пĕтермелле кăна теççĕ. Анӡах вĕсене пĕтерме, каланă пек, çăмăл мар. Пĕр çул пурăнакан курăксем çуркунне иртсенех, çу пуçлансанах пулса çитеççĕ: вĕсен вăррисем пулса çитсе çĕре ӳкеççĕ те, тепĕр кĕркуннеӡен шăтмасăр выртаççĕ. Вĕсем хĕл касса сивĕ курмасăр шăтаймаççĕ пулмалла. Çавсенӡенех хăшĕ тата иквиç çул иртсен тин шăтаççĕ. Çум курăк вăррисем иквиç çул хушшинӡе шăтмасăр выртса хăйсене пĕтесрен сыхлаççĕ. Вĕсем малтанхи çулах шăтса тухнă пулсан, хĕлле çамрăкскерсем сивĕрен пĕтнĕ пулĕӡӡĕç.

Тепĕр çуркунне пур вăррисем те шăтса тухсан вĕсем уйарпа йе сивĕпе пĕтĕмпех пĕтнĕ пулĕӡӡĕç. Çавăнпа çĕрĕçлекен хăй уйне çумлă курăксенӡен тасатас тесен, вĕсене шăтса тухсанах пĕтерес пулаӗ, вăрă кăларма парас пулмасӗ. Çĕртме уйĕсенӡе тата темиçе çул пурăнакан курăксем пур. Вĕсенӡен пуринӡен ытла туна пек тымарлă курăксене пĕтерме хĕн.

Тымар пек туна çинӡе кăӡăкăсем пур. Çав кăӡăкăсенӡен çитĕнекен тунасем тухаççĕ. Çĕр çинӡи

тунине касса пăрахсан ун вырăнне çĕрти тымар пек тунаран урăх туна çÿлелле çитĕнсе тухаť. Çĕр кăпăшка, нÿрĕ пулсан вĕсем лайăхрах çитĕнеççĕ.

Çак халĕ каланă темиçе çул пурăнакан курăксене тарăн сухаланипех пĕтерме пулмасť. Вĕсене пĕтерес тесен тунаран тухакан кăђăкăсеңе çитĕнме парас пулмасť: тухнăçемĕн пĕтерсе тăрас пулаť. Çав курăксен малтанхи çулçисем тымар пек туна ăшĕнђи йапаласемпе тăранса пурăнаççĕ. Çавăнпа тымар пек тунара хатĕрлесе хунă çимĕç сахаллаинă çемĕн сахалланса пыраť, унтан пĕтĕмпех пĕтет.

Çапла пулсан тин вара тымар пек тунаран тунасем, çулçăсем тухма ђарăнаççĕ. Çапла ĕнтĕ ана çинђи çум курăксене пĕтерес тесен анана темиçе хут сÿрес пулаť, çум курăкăн çамрăк çулçисене çитĕнме парас пулмасť. Çур çу иртсен сухаласа пăрахнă ана хăйĕн тăпри йăвăрринђен те, çумăр шывĕ çĕре сăрхăнниђен те пусăрăнса хытса лараť.

Хытса кайнă ана çĕнелсе выртаймасť, курăк тымаррисем çĕрейместĕ, çавăнпа унта килес çулхи тырă валли апат пумай хатĕрленеймест. Çавăпа вара анана тепĕр хут сухаласа пăрахас пулаť. Анђах ăна çанталăк уйар ђухне сухалани пит сийен, ун ђух ăна сухалас тесе тĕкĕнме те кирлĕ мар.

Вăл ак мĕншĕн апла. Çанталăк уйар тăнă ђух анан çийелти кăпăшка тăпри пĕтĕмпех типсе кайаť, ун айĕнђи тăпра та пăртак типĕ пулаť. Сухаланă ђух епĕр типсе кайнă тăпрана айала хуратпăр, айалти нÿрĕке тăпрапа çÿле хăпартатпăр. Вара ана çинђе айалти тăпра та, çийелти тăпра та типĕ пулаççĕ. Типĕ тăпра çĕнелсе çĕрсе выртмасť. Çавăнпа унта ыраш та нађар çитĕнекен пулаť. Çумăр çумасăр тăпрара нÿрĕк пĕтсен хресђенĕн тыррине прĕк-

сĕрех типĕ çĕре акас пулаҫ̆, тырă вара икĕ уйăх хушшинҙе те шăтса тухаймасҫ̆.

Çанталăк ытла уйар тăрсан ыраш анине иккĕмĕш хут сухалама кирлĕ те мар, мĕншĕн тесен, ун ҙухне çĕр хытса каймасҫ̆, тата унăн айалти сийĕнҙе нўрĕк нумай пулмасан та, кăшт та пулин пур; анана тепĕр хут сухаласан, епĕр çав нўрĕке те çухататпăр. Ҙăнах та, 1890 мĕш çулта çу пит уйар тăнă. Çав çул çĕртме уйне кам иккĕмĕш хут сухалана, унăн кĕркуне тырри шăтса тухман, кам иккĕмĕш хут сухаламан унăн шăтса тухнă. Уйар çул икĕ хут сухаламан ана çинҙе тăпра çĕнелессе naҙар çĕнелет те, анҙах çĕнелме пĕтĕмпех ҙаранмаст.

Çавăнпа уйар çул анана иккĕмĕш хут сухаламанни икĕ тĕлтен усăллă: унта нўрĕк те пур, тата тырăсене кирлĕ çимĕç те нумайтарах пулаҫ̆. Сухалана анара нўрĕк пулмасҫ̆, вăрри те шăтмасҫ̆, шăтсан та ăна валли апат сахалтарах пулаҫ̆. Çанталăк уйар пирки анана иккĕмĕш хут сухалама йурамасҫ̆, анана çийелтен кăпăшкалатма йаланах кирлĕ мар, мĕншĕн тесен, уйар ҙухне çĕр хытмасҫ̆. Ăна айалти сийпе çийелти сий çыпçăнсан анҙах кăпăшкалăтас пулаҫ̆. Малтан пăртак çумăр çусан та, сухана иккĕмĕш хут тума кирлĕ мар, çĕр ытла ванса çемçелсе кайаҫ̆.

Анана çуркуннеренпех лайăх пăхса ĕçлесе пырсан, вăл нумайах типмест, çанталăк уйар пулсан та пĕтĕмпех нўрĕ пулаҫ̆. Çакăн пек пулсан анана сухалама йураҫ̆ те, кирлĕ те. Сухалана ана çемçелет, тата айала нўрĕ тăпра кайаҫ̆. Çавăнпа ана лайăх çĕрсе выртаҫ̆. Тырă акиҙҙен сухалана çĕртме анине пăртак кантарас пулаҫ̆. Вăл акă мĕншĕн кирлĕ. Ана акиҙҙен кăпăшка пулсан, акнă ҙухне ĕçленипе вăл тата кăпăшкаланса кайаҫ̆, кĕл пекех пулаҫ̆.

Акнă хыççăн пăртак çумăр çусанах ана çийелтен хытса кайат̌. Акиђђен пăртак канса выртсан, акнă ђух сӳренипе кĕл пекех пулса ванса каймаст̌, ветĕ муклашкаллă анђах пулат̌, сахал çăмăрпах хытса кайат̌. Çав кăпăшка çĕре шыв та сывлăш та ђас кĕреççĕ; вĕсем калђа тымаррисене вăйлăланма тата айаларах нӳрĕ çĕре сарăлма пулăшаççĕ. Лайăх сухаласа сӳренĕ çĕртме уйĕнђе нӳрĕк нумайтарах пулат̌, пађар сухаласа сӳренинђе сахалтарах пулат̌.

Йеккатеринослав кĕпĕрнинђе пĕр хура пус çĕртме_уйăхĕнђе икĕ ана пулнă, иккĕмĕшне те кĕркунне тăватă вершук таран сухаласа хăварнă. Анђах çуркунне пĕр анине темçе хут çийелтен кăпăшкалатнă, тепĕрне сӳремен. Çав икĕ анара çуркунне шыв иккĕшинђе те пĕр пекех пулнă, анђах авăн уйăхĕнђе пĕр анинђе тарăнăшĕ 2 вершук тарăн, çĕрте шыв çĕр пайран вунтăхăр пай пулнă, тарăнăшĕ ултă вершук çĕрте 23 пай пулнă; сӳремен ани çинђе тарăнăшĕ икĕ вершук çĕрте 10 пай, 6 вершук çĕрте 16 пай шыв пулнă. Çапла ĕнтĕ, епĕр хура çĕртме тунă ђух, çĕр ан типтĕр тесен, пирĕн ăна кĕркуне сухаласа хăварас пулат̌, унăн çийелти сийне йалан кăпăшка тытас пулат̌, ун çине курăк мĕн çитĕнме парас пулмаст̌.

## 5. Ахалђ çĕртме, ăна йепле тумалла. Курăк акнă çĕртме.

Пирĕн патра пуринђен ытла симĕс çĕртме тăваççĕ. Ку çĕртмере те анана тĕрлĕ ĕçлесе çĕнетме пулат̌. Тĕрлĕ ĕçлени пуринђен ытла анана тĕрлĕ вăхăтра сухаласа пăрахнинђен килет. Пĕри анине çуркуннех сухаласа пăрахат̌, тепĕри çĕртме уйăхĕ пĕтеспе тин сухалат̌. Ир сухаланă ана çĕрсе лайăх çĕнелет,

кайран сухалани хытах çĕнелеймест: вăл ђас сухаламан пирки нумайђђен хытнипех выртӑ; хытса выртакан çĕр пит нађар çĕрет, ђасах типсе кайӑ. ун çинђе тата куръаксем çитĕнеççĕ, çав куръаксем те çĕре пит хытă типĕтеççĕ, тата тыррапулла кайас апата та пĕтереççĕ; çитменнине тата вĕсем хайсем вăррине ана çине ўкереççĕ: вăррисем унта иквиç çул иртсен тин шăтса тухаççĕ те, анана каллех сийен тăваççĕ.

Çавăнпа кайран сухаланă ана çинђе ыраш анђах мар, ун хыççăн акнă çуртырри те нађар пулӑ. Ыраш анине мĕн ђухлĕ кайран сухаланă, çавăн ђухлĕ тырă нађар пулӑ, уйар пулсан тата нимĕн те пулмас̆. Полттав кĕпĕрнинђе пĕр çын пĕр анине ака уйăхĕнђе, тепĕрне çĕртме уйăхĕн 15-мĕш кунĕнђе сухаланă. Унта вара тырă акă мĕлле пулнă. 1890-мĕш çулта ир сухаланă анаран 142 пăт, кайран сухаланинђен 63 пăт ыраш тухнă; 1883-мĕш çулта малтан сухаланинђен 150 пăт, кайран сухаланинђен 75 пăт ыраш тухнă; 1891-мĕш çулта ир сухаланинђен 201 пăт, кайран сухаланинђен 31 пăт анђах илнĕ. Çапла кайран сухаласан тырă нађар пулни курăнсах тăрӑ. Çавăнпа симĕс çĕртме туса акнă ана уйарпа ан аптăратăр тесен, анасене йаланах çуркунне сухаласа сўрес пулӑ.

Анана çĕртмене йарсан, пирĕн пуринђен малтан нўрĕ çĕре витсе тăракан кăпăшка çĕр тума тăрăшас пулӑ. Çав сийе мĕн ђухлĕ ир тăватпăр, çавăн ђухлĕ аван: ун ђухне хуçа ани сайа кайасран хăрамас̆, тата иккĕмĕш сухине хăçан тăвас тет, çавăн ђух тума пултарӑ. Малтанхи сухана тăвиђђен ана куракланса çеремленнĕ пек пулсан, ăна лайăх сарлака касăллă сухалас пулӑ, куръаксене айала, суха тăпри айне тăвас пулӑ.

Ҫапла тусан икӗ сий пӗрпӗринҗен уйӑрӑлса тӑраҫҫӗ, ҫӗр вара җас типмест, ҫӗрсе выртаҭ. Акасуха ҫине ҫавӑн пек тунӑ уйа кирек хыҫан та тухма йураҭ: ҫийелти сий ӑшӑх пирки ӑна сухаласа айала йарсан та, вӑл анана питех пысӑк сийӗн тӑваймасҭ. Ҫапах та иккӗмӗш сухана ҫумӑр хыҫҫӑн тусан авантарах пулаҭ: ҫумӑр хыҫҫӑн сухаласан типӗ тӑпрана айала ҫавӑрса хумалли пулмасҭ, нӳрӗ тӑпрана ҫавӑрса хумалла пулаҭ.

Васкамалла мар пулсан, анана ҫумӑр кунсенҗе анҗах сухаласан та пыраҭ. Уйа навус тӑкмалла пулсан ӑна сухалиҗҗен тӑкаҫҫӗ, тӑксанах пӗр пек салатса пӑрахас пулаҭ. Салатса пӑрахнӑ навус ҫӗре типесрен сыхласа тӑраҭ. Ана ҫине курӑксем шӑтса тухсан иккӗмӗш хут суха тума васкас пулаҭ, ҫӗр ан типсе кайтӑр тесе. Сухаласса ҫинҫе касӑллӑ сухаласан аван, ҫӗр вара тикӗс выртаҭ, тата лайӑх ванаҭ.

Сухаланӑ ана тикӗс, вӗтӗ муклашкаллӑ выртаҭ пулсан ӑна ҫийӗнҗех сӳремесен те йураҭ, ҫийелтен кӑшт типсе пусӑрӑнса выртма парас пулаҭ. Ҫапла тусан ҫӗр сӳренӗ җух кӗл пекех ванса каймасҭ. Малтанхи суха хыҫҫӑн ҫумӑр пулсан ана ҫийелтен хытса ан кайтӑр тесе тӑрӑшас пулаҭ, ун ҫине курӑксем ҫитӗнме парас пулмасҭ, ҫумӑр хиҫҫӑн анана йаланах сӳресе кӑпӑшкалантарас пулаҭ. Ҫапла тусан ҫӗр нӳрӗ тӑраҭ, ҫӗрессе те хытӑ ҫӗрет.

Малалла иккӗмӗш сухана хӑҫан тумалли ҫинҗен калҫӑпӑр. Иккӗмӗш сухана симӗс ҫӗртмепе хура ҫӗртмене тунӑ пекех тӑвас пулаҭ. Ҫумӑр ҫӑвас пулсан ҫийелти сий нӳрӗ пулсан, иккӗмӗш хут сухалани лайӑх та, кирлӗ те кӑпӑшка ҫӗр хытӑ ҫӗрет, лайӑх ҫӗнелсе выртаҭ, ҫав вӑхӑтрах тата нӳрӗкне те пӗтермест. Ҫанталӑк уйар тӑраҭ пулсан, ҫийелти сий тип-

се кайнă пулсан, сухалама пăртак хăрамалла: малалла çумăр ҫ̌ас çумасан ана пĕтĕмпех типсе кайаҭ, çĕрме те ҫ̌аранаҭ, тырă аксан вăл та лайăх шăтса тухмасҭ. Иккĕмĕш сухана тусан ананăн çийелти сийĕ ан типтĕр, курăксем ан шăҫ̌ҫ̌ăр, вăрлăх акаҫ̌ҫ̌ен ана кантăр тесе анҫ̌ах тăрăшмалла.

Малалла пирĕн патра çĕртме мĕлле тунине пăхар. Пирĕн çĕртмене утă çине тухас умĕн тин тухаççĕ, иртерех тухсан выҫ̌ăхсене çўреме вырăн çук теççĕ. Уй çав вăхăтҫ̌ен пит хытă типсе кайаҭ те, сухаласан мăн муклашкаллă пулса выртаҭ. Муклашкасем тем пек çирĕп пулаççĕ, сўресен те ванмаççĕ. Айалти суха тĕкĕнмен сине витсе выртаймаççĕ. Çавăнпа хăшĕ анине çумăр çусан сўрĕпĕр тесе, сўремесĕр хăвараççĕ, ана вара тата хытăрах типсе кайаҭ: муклашкисем хăйсем те, ун айĕнҫ̌и сий те йăлт типсе лараççĕ.

Нумайĕшĕ тырă пулма сухаланă сий анҫ̌ах кирлĕ теççĕ. Анҫ̌ах вăл тĕрĕс мар. Пур тĕрлĕ тырă та, пур тĕрлĕ курăк та сухаламан сийрен те нумай усă кураҭ, унта вĕсем хăйсен тымаррисене йараççĕ, унтан шыв туртса илеççĕ, унтанах тата хăйсене тăрантаракан çимĕçе илеççĕ. Курăксене уйар ҫ̌ух пуринҫ̌ен ытла çак сухаламан сий кирлĕ, мĕншĕн тесен вĕсем çўлти сухаланă сийе наҫ̌ар çыпăçса тăнă пирки хăй нўрĕкне сыхласа тăраҭ.

Сухаламан сийре кĕркуннеҫ̌енех шыв тăни сухаланă сийре тăнинҫ̌ен те кирлĕрех. Çийелти сий пăртак çумăр çусан та нўрелме пултараҭ, айалти сий пултараймасҭ. Çавăнпа çанталăк уйар пулсан тырă тымарĕ тарăн кайаймасҭ, çийелти типĕ сийре анҫ̌ах пулаҭ, йур айне вара вăйланмасăр кĕрет.

Çапла вара симĕс çĕртме тусан çийелти сий те, айалти-сий те типсе лараççĕ. Тырă акма тесе, иккĕмĕш сухана тусан, епĕр муклашкасене пĕр вырăнтан тĕпĕр вырăна анђах куçаратпăр. Çапла вара тырă акмалла пулиђђен пирĕн çĕр кăшт та çĕрмест, çĕпелмест, типсе анђах выртӑ, акас тесен çумăра кĕтсе тăмалла пулӑ. Çумăр çусанах сӳреççĕ те, акма тытăнаççĕ. Кĕркунне çумăр пулсан ыраш ђасах шăтса тухӑ. Хĕлле йур нумай çусан тепĕр çулне ыраш ытла нађарах пулмас̆. Анђах хĕлле йур сахал çусан, çулла çанталăк уйар тăрсан выçлăх пуласинђен хăтăлма çук вара.

1890-мĕш çулта çумăр кайран çунă, вăл та пулин çĕре çийелтен анђах йĕпетнĕ. Кађђасем кайран шăтса тухнă, анђах çĕр типĕрен тымар тарăпах йарайман. Хĕлле йур сахал çунă та çĕре нӳрĕк тарăн çапайман. Çуркунне нӳрĕк çийелтен анђах çапнăран тымарсем çийелте анђах пулнă. Çийелти сий типсе кайсан вĕсем те пĕтнĕ.

Çĕртмене кайран тусан та ăна пăртак та пулсан çĕнетме пулӑ. Çапла тăвас тесен пуринђен ытла анана мăн муклашкаллă сухаласа ăна типĕтсе йарас пулмас̆. Çĕр типсе кайнă пулсан ун-çинђе кăпăшкаллă ăпăх сий тăвас пулӑ. Çапла тусан айалти сий нӳрелме тытăнӑ, мĕншĕн тесен айалти сийсенђен нӳрĕк çӳç пек çинçе хушăсем тăрăх çӳлелле хăпарӑ, кăпăшка сий патне çитсен ђарăнӑ. Çĕр вара нӳрелсе выртӑ, çемçелет, пăртак çĕререх парӑ. Пĕђĕк касăллă сухаласан ана ванса пырӑ, анђах типсе кайнă пирки кирпĕђĕрен шултрарах муклашкаллă пулӑ. Çавăнпа анана сухаланӑ хыççăн сӳресе пырас пулӑ. Çинђех сӳремен муклашкасем хытса кайаççĕ те, кайран ванмаççĕ, вĕсене ватас пулсан, ана çинђе вара каска йăвантарас пулӑ.

Çанталăк уйăр тăрат пулсан çĕртмене епĕ халĕ каланă пек тăвас пулат; çумăр çуса тарăн йĕпетсен анана çуркунне сухаласа хунă ђухнехи пекех ĕçлес пулат. Ана йепле ĕçлемеллине епĕ сире каланăђђĕ. Ана сухаламасăр-кайа йулнă пулсан, ăна мĕн тарăнăш сухаламаллине пĕлес пулат. Анана çуркуннех, йе кĕркуннех сухаласа хунă пулсан ăна тарăн сухалама йурат. Унта вара курăксене кирлĕ йапала нумайтарах хатĕрленсе тăрат.

Çав шутпах кайа йулнă сухана сухаланă ђух, çумăр çуса çĕре тарăн йĕпетсен, йĕпеннĕ сийрен тарăнтарах сухалама йурат. Çапла тусан типĕ тăпра çӳле тухса выртат, анана типесрен сыхлат. Иккĕмĕш сухана типпипех сухаламалла пулсан, пăртак ăшăхрах сухалас пулат. Тарăнтарах сухаласан ана муклашкаллă пулат те, çĕр типсе хытса кайат. Типĕ анана сухаласан сухаланă сий хăй айĕнђи сийе малалла типесрен анђах ђарса тăрат, çакăнсăр пуçне урăх нимĕн усси те çук, епĕр анана ватапăр анђах.

Çумăр хыççăн сухаласан ана çĕрсе çĕнелсе выртат. Çумăр хыççăн уйра тĕрлĕ ĕç тумалла пулат. Вăл çумăр йепле çунинђен килет. Çумăр хытă çуса çĕре виттĕр йĕпетсен анана пăртак çийелтен сӳрес пулат, унтан пур ĕçе те нӳрĕ ђухне сухаланă пек тăвас пулат. Ана хыта пуçасан, акас вăхăт инçе пулсан ăна иккĕмĕш хут сухаласан авантарах. Сухаласан нумай вăхăт иртсен тин çумăр çусан; анана сӳрес анђах пулат. Тата çийелтен кăпăшка сий туса тăрас пулат, иккĕмĕш суха тăвас пулмаст.

Çумăр хытах çумасан анана сӳремелле анђах. Çав çумăрах кайран çусан анана тепĕр хут сухалас пулат, нӳрĕ тăпрана айала тăвас пулат, типпипе çӳле кăларас пулат. Епĕ ку таранђђен каланине астуса ил-

се хуҫанăн хăйĕнех ҫумăр ҫусан, йе ҫумасан: хытă ҫусан, йе хуллен ҫусан мĕн тумаллине пĕлсе тăрас пулать. Вăрлăха ир сухаласа акнă пекех акас нулать, анҫах хăшҫухне ҫĕр типĕ пирки ҫумăра кĕтсе тăмалла пулать. Ҫавăнпа вара кайран акнă тырă йур айне вăйланса кĕреймест.

Ҫĕртме лайăх тунă уйра тырă пĕр ҫул анҫах мар, тепĕр ҫулне те лайăх пулать. Вăл ҫăнах та ҫанлах пулмалла. Ҫĕртме уйне вăхăтĕнҫе сухаласа сӳресен вăл ҫăвĕпех нӳрĕ тăрать. Ҫĕр хăй нӳрĕ пирки тата хĕвел ăшă пăхнăран пит лайăх ҫĕрет, лайăх ҫĕнелсе выртать, тырра кирлĕ йапаласене ытлашшипех хатĕрлет. Навус тăксассăн йепле тырă темиҫе ҫулҫен лайăх пулать, анана кирлĕ вăхăтра сухаласан та ҫавăн пекех пулать.

Халĕ курăк акнă ҫĕртме ҫинҫен пĕрик сăмах калăпăр. Тулли ҫĕртме тунă ҫух ана ҫара ан выртмăр тесе, унта ҫас ӳсе ҫитĕнекен курăксем акаҫҫĕ. Ҫакăн пек ҫĕртме тырăпулă пулас йенҫен пуринҫен те наҫар. Ҫĕртме уйĕнҫе курăк ҫитĕннĕрен ҫĕр пĕтĕмпех типсе кайать, ҫийелти сий анҫах мар, айалти сий те типтипĕ пулать. Вĕсем вара хĕлле йур шывĕпе тин йĕпенсе ҫитĕнме пултараҫҫĕ. Ҫавăнпа тулли ҫĕртме тусан тырă йаланах наҫар пулать. Хăшҫухне хура, йе симĕс ҫĕртме тусан та, тырă наҫар пулать пулсан, ун ҫухне тулли ҫĕртме тусан, нимĕн те пулмасть.

## 6. Ҫуртри уйне йепле ĕҫлемелле. Уйа курăк акма кирли.

Малалла епĕр ҫуртри акасси ҫинҫен калаҫăпăр. Ҫуртри акас анана хăшĕ кĕркуннех сухаласа хураҫҫĕ, хăшĕ ҫуркунне тин сухалаҫҫĕ. Кĕркунне сухаласа хунă пулсан, ҫуркунне анана акаҫҫĕ те сӳреҫҫĕ анҫах.

Çĕр нӳрĕ тăтăр, тырă авантарах пултăр тесен, анана хăçан сухаламаллаши? Кĕркунне. Вăл акă мĕншĕн çапла. Çуртри акма анана кĕркунне сухаласа хăварнинҫен те усăлларах.

Хуçа, анине çуркунне сухалăп тесе, кĕркунне сухаламасан, унăн пысăк сийен пуласса кĕтсех тăмалла. Çуркунне тырă хăйне валли нӳрĕк нумайтарах тытсе йултăр тесе ăна иртерех акма тăрăшас пулаҫ. Çуркунне шыв пĕр кунта та темĕн ҫухлĕ типет. Çавăнпа, сухалама çуркунне тин тытăнсан, епĕр хăш хăш анасене типĕтсе йама пултаратпăр. Кĕркунне сухаласа хурсан пирĕн çĕрти нӳрĕк пăхма пĕлсен тырă пулса çитиҫҫенех пыраҫ. Çуркунне тин сухаласан çĕрте шыв сахалтарах пулаҫ, тата вăл тырă акаҫҫен нумай типсе кайаҫ. Çавăнпа пире тырăран нумайтарах усă пултăр тесен, пирĕн çуртри акмалла анасене те кĕркуннех сухаласа хурас пулаҫ.

Çуркунне вăрлăх аксан пирĕн каҫҫасем ҫас, харăс, тата вăйлă шăтса тухҫĕр тесе тăрăшас пулаҫ. Çуртри уйне сухаланă ҫухне епĕр унти çум курăксене пĕтерейместпĕр. Çавăнпа тырăпа пĕрле тăпрара курăк тымаррисем те, вăррисем те пулаççĕ. Вĕсем малтан тăпра ăшĕнҫе выртакансксрсем шăтма хăтланса анҫах тăраççĕ. Ана çине çум курăкĕ иртерех шăтса тухсан вăл тырра хупласа илет, çитĕнме памасҫ, тырă вара таса, лайăх çитĕнессине кĕтме çук.

Тырă малтан шăтса тухсан вăл çум курăкĕсене хупласа илет, çитĕнме памасҫ, çум курăкĕ вара çукпа пĕрех пулаҫ. Хăшҫухне тырă пулни пулманни 3-4-5 кун кайран акпинҫен килет. Тырă акиҫҫен малтан çум курăк вăррисем шӳсе çитеççĕ, туна пек тымар çинҫи кăҫăкăсенҫен тунасем тапранаççĕ. Çавăнпа вĕсем тырă пĕрҫисем шăтса тухиҫҫен малтан шăтса

тухаççĕ те, тырра хупласа илме пултараççĕ. Тырă пĕрҫисем тата пăртак типĕрех çĕре ӳкнисем ҫасах шăтса тухаймаççĕ.

Тырă ҫас шăтса тухни çĕр йепле нӳринҫен килет. Мĕн ҫухлĕ çĕр нӳрĕ, çавăн ҫухлĕ тырă ҫас шăтса тухаҭ. Çавăнпа пирĕн пуринҫен малтан çуртри уйĕнҫе çийелти сийе кăпăшкалатма тăрăшас пулаҭ. анан çийелти сине хытма ҫарас пулаҭ. Çав ĕçе хăвăртрах, ҫас тăвас пулаҭ. Кайран акнă уйра тырă, кайран акнă пирки, тата çĕр типĕрех пирки те, кайрантарах шăтса тухаҭ.

Уйар çанталăкра акнă ҫух тырра пăртак тарăнтарах акас пулаҭ. Вĕсене сӳрепе анҫах сӳресен вĕсенҫен нумайĕшĕ çийелти кăпăшкаллă типĕ çĕре йулаççĕ те, кайран çумăр çусан тин шăтса тухаççĕ. Çавăнпа вара калҫа ана çинҫе пĕрпек тан, пĕрпек тикĕс пулмасҭ. Хăшҫухне çуртри акса пĕтерсен çумăр çусан анисене çийелтен хытарса лартаҭ.

Анана çийелтен хытарса йама йурамасҭ, ăна сӳресе кăпăшкалатас пулаҭ. Ана çийĕ хытса кайсан нӳрĕк те нумай пĕтет, калҫи те çĕр хытă пирки ҫас шăтса тухаймасҭ. Çуркунне хăшхăш тырра кайа йулса акаççĕ. Çавăн пек тырра акмалли анасене малтанах сухаласа сӳресе хурас пулаҭ, анҫах вĕсен çине йаланах кăпăшка тытса тăрас пулаҭ, тата унта курăк мĕн çитĕнтерме йурамасҭ. Акас умĕн анасене тепĕр хут сухалама кирлĕ мар. Тепĕр хут сухаласан çанталăк уйар тăнăран çĕр нумай нӳрĕк çухатма пултараҭ, ытла вĕтĕ ванса кайаҭ, тата тырă акаҫҫен канса выртаймасҭ.

Епĕ сире тырăпулă уйарпа ан аптăратăр тесе, пирĕн мĕн тумаллине тата ăна мĕншĕн апла тумаллине каласа патăм. Тырăпулă уйарпа ан аптăратăр

тесе пирĕн уйа йур пухма тăрашас пулат, акмалли анасене кĕркуниех сухаласа пăрахас пулат, анан çийелти сийне хытса кайма парас пулмаст ăна йаланах кăпăшкалатса тăрас пулат, ана çине курăксем çитĕнтерме йурамаст, иккĕмĕш хут сухана тата тырă акасса çумăр çуви çуманнине пăхса тăвас пулат. Çаксене пурне те çĕрĕçлекенĕн лайăх астуса тăрас пулат, манас пулмаст.

Епĕ сире çак кĕнеке çинҫех тата çĕртмене çуртри уйне йепле ĕçлемелли çинҫен каларăм. Сирĕн çавăн ҫухнехи ĕççене пурне те йалан кĕнеке çинҫе каланă пек тумалла пулмаст, мĕншĕн тесен вĕсене тăвасси тĕрлĕ йапаларан килет: çанталăк йепле тăни, çĕр йепле тăпраллă, ăна ĕлĕк йепле ĕçленĕ, мĕлле ĕçленĕ, выҫăхҫĕрлĕх çӯреме вырăн пурринҫен, лайăх йепле шутланинҫен, тата ытти йапаласенҫен те нумай килет.

Çавăнпа уйри ĕççене йаланах кĕнеке çинҫе каланă пекех тумалла пулмаст, тата кĕнеке çинҫе пур ĕçе йепле тумаллине, хăçан тумаллине каласа та пĕтерес çук, Çавăнпа çĕрĕçлекенĕн çанталăк йепле тăнине сăнас пулат, тата тырă уйарпа ан пĕттĕр тесен мĕн тумаллине астуса тăрас пулат; хăйĕнех акана хăçан, тата мĕн тарăнăш сухаламаллине, хăçан сӯремеллине, хăçан акассине пĕлсе тăрас пулат. Ăна пĕлес тесен унăн пĕрпĕр ĕçе хăçан тусан, йепле тусан авантарах пулмалла шут пур, çавăн пек тăвас пулат.

Тырăпулă аван пултăр тесен пирĕн çĕртме уйне те, çуртри уйне те иртерех сухаласа пăрахмалла, ана çинҫе курăк тавраш çитĕнтерме кирлĕ мар, çĕртме çине те иртерех тухма тăрăшмалла. Анҫах тырă туса илес ĕçе çапла тусан, епĕр выҫăхҫĕрлĕхе мĕн çитерсе усрăпăрши? Çĕртме уйне иртерех туса пăрахсан выҫăх-

сене çӳреме выран пулмасть, вĕсене ытла та naђар пулать; сухаласа хумасан ана типсе кайать, ним çĕрмесĕрех, йусанмасăрах выртать, унта вара тыра та naђар пулма пултарать.

Ана çинђе курăк лайăх пулсан епĕр выђăх валли апат пур тесе хĕпĕртетпĕр, анђах ана çинђи курăк вăл анана типĕтет, çĕрсе, йусанса выртма памасть. Çапла ĕнтĕ епĕр малалла та тырăпулла хаљхи пекех туса пурăнсан пирĕн хăшхăш ĕçе туна ђух аптăраса çитмелле пулать: тăвас —выђăх апатсăр йулать, тăтăвас мар—тырри naђар пулать.

Ĕçе çапла туса пурăннă ђух тырри те naђар пулать, выђăхĕ те выçă тăрать. Çĕр ĕçлеме вĕреннĕ çынсем çак инкекрен йепле тухашши тесе, тахçанах шухăпла пуçланă.

Халĕ ĕнтĕ нумай çĕрте çĕре урăхла ĕçлеççĕ, çавăнпа унта тырри те лайăх, аван пулать, выђăххи те нихăçан та выçă тăмасть. Çак ĕçе пĕлес тесен есĕр «Тырăпа курăксем çинђен» тата «Хирте курăксем акасси çинђен» калана кĕнекесене авантарах вуласа пăхăр. Унта çав ĕçе йепле тăвасси çинђен пит аван калана.

# ТУПМАЛЛИ.

Стр.

1. Хура тăпранăн хăшхăш хăвађĕсем, хура тăпра пур вăхăтра та пĕр пек выртманни. 3

2. Тăпрари нӳрĕк. Ќурăксене усăлă шывпа усăсăр шыв. Уйа йур йепле пухмалла . . 9

3. Хура тăпра ĕçленĕрен улшăнни. Мĕншĕн улшăнни. Ќурăксем çĕре типĕтни . . . 14

4. Тĕрлĕ çĕртме. Хура çĕртме, ăна йепле тумалла . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 21

5. Ахаљ çĕртме, ăна йепле тумалла. Ќурăк акнă çĕртме . . . . . . . . . . . . . 27

6. Çуртри уйне йепле ĕçлемелле. Уйа курăк акма кирли . . . . . . . . . . . . . . . 33

# ОБ'ЯВЛЕНИЕ.

**В складе Чувашского Отделения Государственного Издательства на чувашском языке имеются следующие книги:**

1. **А. М. Михайлов.** Сайра Майаксем (Политикка пукварӗ).
2. Йумахсемпе Калавсем.
3. **П. И. Иванов.** Руководство к ведению первоначальных уроков русского языка в чувашских начальных школах.
4. Йалти шкулсенҫе малтанхи ҫул вӗренмелли Сатаҫ Кӗнеки.
5. Йалти шкулсенҫе икӗмӗш ҫулта вӗренмелли Сатаҫ Кӗнеки.
6. Йалти шкулсенҫе виҫӗмӗш ҫулта вӗренмелли Сатаҫ Кӗнеки.
7. **А. Е. Ефремов.** Траххом—ҫӑваш ннкекӗ.
8. **А. Йевҫихнейӗв.** Ҫӗр котексин никӗсӗсем.
9. **В. Лункевӗҫ.** Аслатипе Ҫиҫӗм.
10. РФСК Респупликки Ҫӗр котексн.
11. **К. Йакотовски.** Етем ӳтпӗвӗ, малтанхи шкулра вӗренмелли кӗнеке.
12. **Йуман.** Ахтономлӑ Ҫӑваш Оплӑҫӗ (Родиноведение).
13. **М. П. Петров.** Правила чувашского правописания.
14. **Е. Д. Тимофеева.** Ҫулпуҫӗ (Букварь).
15. Календарь на 1924 год.
16. Пуквар хыҫҫӑн вуламалли 1-мӗш кӗнеке «Ҫутталла».
17. **А. Т. Быков.** Краткий словарь общеупотребительных русских и чувашских слов.
18. К. Фламмарион. Астрономи кӗнеки. (75 рисунӑклӑ).
19. **Ф. Т. Тимофеев.** Ҫӑваш ҫӗлхийӗн Крамматтикӗ.
20. **Ф. П. Павлов.** «Сӑрпай» Хитрелетнӗ ҫӑваш йуррисем.
21. Йӑвӑҫкурӑк, ӑна пӑхса ӳстересси.

**Печатаются на чувашском языке:**

1. Геометрия для школы 1 ст., 2-ая часть.
2. Общая география.
3. География Р.С.Ф.С.Р.

Готовится к печати: 1) Чувашско-русский словарь и 2) История чувашского народа.

С требованиями обращаться по адресу:

**г. Чебоксары Ч. А. О. ГОСИЗДАТ.**

Оптовым покупателям делается скидка.